28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 НОЯБРЬ 3 ШАМАТКУН 214 (6965) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнай Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Колхозниксемпе колхозницăсем, хресченсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, агрономсемпе зоотехниксем! Халăха ытларах апат-çимĕç, промышленноçа ытларах чĕртавар туса парар! Государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарар!

(ОКТЯБРЬТИ СОЦИАЛИЗМЛĂ АСЛĂ РЕВОЛЮЦИ ПУЛНĂРАНПА 28 ÇУЛ ÇИТНĔ ТĔЛЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ ЧĔНСЕ КАЛАНИСЕНЧЕН).

Сталинла Конституци ялавĕ айĕнче çĕнĕ çĕнтерÿсем патне—малалла!

Пирĕн Тăван çĕршыв халĕ питĕ пысăк кунсене пурăнса ирттерет. Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 28 çул тултарни çывхарса килет. ССР Союзĕнчи ĕçсыннисем ăна нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тата Япони империалисчĕсене хирĕç кĕрешсе çĕнтерсе илнĕ мирлĕ условире палăртаççĕ. Совет çĕршывĕнчи халăхсем СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ.

Çак кунсенче совет çыннисем пирĕн Сталинла аслă Конституци çинчен—Совет Государствин Тĕп Законĕ çинчен шухăшлаççĕ. Çав законра социализмлă демократин — тĕнчери чи малта пыракан тата вĕçне çитнĕ йĕркеллĕ демократин уйрăмлăхĕсене ăслăн, уçăмлăн та мухтавлăн каласа панă. Конституцин статьисене халăх татах та тепĕр хут вуласа тухать. Çав статьясенче чăн-чăн пурнăçа, пурнăçри чăнлăха çав тери туллин кăтартса панă. Унта пирĕн мĕн çукки çинчен, совет халăхĕ мĕн çĕнтерсе илменни çинчен пĕр сăмах та каламан. Сталинла Конституци вăл «халиччен кĕрешсе çĕнтерсе илнисене регистрацилени тата законласа çирĕплетни пулать» (Сталин).

Совет халăхĕ Сталинла Конституци ялавĕ айĕнче тăватă çул хушши çав тери паттăррăн вăрçрĕ. Вăл пирĕншĕн ялав пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен унта совет çыннисемшĕн чи хаклине, чи тасине пурне те çырса хунă, çавсене вĕсем хăйсен вăйне те, хăйсен пурнăçне те шеллемесĕр хÿтĕлерĕç. Социализмла строй, чăн-чăн халăх влаçĕ, пур çынсем те хăйсем мĕнле рассăпа наци çынни пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социальнăй сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр чăн-чăн пĕртан пулни, пирĕн демократиллĕ аслă правасемпе ирĕклĕхсем—çаксемшĕн ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар воинĕсемпе тылри ĕçсыннисем ĕмĕрне курман паттăрла ĕçсем турĕç! Вăрçăн чи йывăр вăхăтĕнче те совет çыннисем Сталинла Конституцин мухтавлă статьисене асран ямарĕç. Çав статьясенче пирĕн илемлĕ, ирĕклĕ, социализмлă çĕршывăн сăн-сăпатне туллин те уçăмлăн кăтартса панă. Унта этеме этем эксплоатацилессине ĕмĕрлĕхех пĕтерни çинчен çырса хунă.

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ рабочисемпе хресченсен социализмлă государстви пулса тăрать», тенĕ пирĕн Конституцин 1-мĕш статьинче. Фашистла агрессорсене эпир шăпах ĕнтĕ çакăн пирки çĕнтертĕмĕр. Социализмлă строй пирĕн çĕршыва никам çĕнтерейми вăй парса тăчĕ, пире вăрçăра та, экономикăпа идеологи тĕлĕшĕнчен те тăшмана çĕнтерме май пачĕ.

Пирĕн Конституцин никĕсĕ,—тенĕ Сталин юлташ,—«социализм принципĕсем пулаççĕ, социализм кĕрешсе илсе пурнăçа кĕртнĕ тĕп тĕрексем пулаççĕ: çĕрсем, вăрмансем, фабрикăсем, заводсем тата производствăн ытти хатĕрĕсемпе средствисем социализмлă харпăрлăх пулса тăни; эксплоатаци тата эксплоататорла классене пĕтерни, нумайрахăшĕн чухăнлăхне тата сахалтарахăшĕн иртĕнĕвĕсене пĕтерни; ĕçсĕрлĕхе пĕтерни; ĕçлев—«кам ĕçлемест, çав çимест» тенĕ формула тăрăх кашни ĕçлеме пултаракан гражданинăн обязанноçĕ тата хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăни. Ĕçлев прави, урăхла каласан, кашни гражданинăн гарантиленĕ ĕç илес прави; канăç прави; вĕренÿ прави; тата ытти сем те, тата урăххисем те».

Совет халăхĕ халĕ вăрçăра аслă çĕнтерÿ тунă хыççăн, мирлĕ строительствăна аталантарма тытăнчĕ. Пирĕн çĕршывра социализм çĕнтернине пула вăл çĕнĕ ăнăçусем тăвассипе эпир çирĕп шанса тăратпăр. Хуçалăха социализмлă йĕркепе тытса пыни кăна вăрçă вăхăтĕнче пирĕн вăйсене ÿстернĕçемĕн ÿстерсе пыма пултарчĕ, хуçалăха социализмлă йĕркепе тытса пыни кăна çĕршыври халăх хуçалăхне хăвăртрах юсаса ура çине тăратма тата малалла аталантарма май парать.

ССР Союзĕн Конституцийĕн никĕсĕ совет обществи тусла икĕ класран—рабочисемпе хресченсенчен тăни, влаçа ĕçсынни классĕсем тытса тăни пулать. «ССР Союзĕнче пĕтĕм власть ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем урлă хулапа ял ĕçсыннийĕсен аллинче тăрать», тенĕ пирĕн Конституцин 3-мĕш статьинче. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пĕтĕм совет халăхĕ пĕрлĕхлĕ пулни çав тери пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. Рабочисемпе хресченсен çирĕп союзне, совет интеллигенцийĕ хутшăннипе вăйлăланчăскерне, тăшман аркатма пултараймарĕ. Пирĕн халăх хушшинчен тухнă совет интеллигенцийĕ рабочисемпе хресченсене промышленноçпа ялхуçалăхне малалла çĕклес тĕлĕшпе пулăшрĕ, халĕ те пулăшать, совет наукипе культурине малалла илсе пычĕ, халĕ те малаллах илсе пырать.

Пур нацисемпе рассăсен те прависем пĕртан,—тенĕ Сталинла Конституцире. Пирĕн совет çĕршывĕнче çирĕпленнĕ халăхсен туслăхĕн тата пур рассăсемпе нацисен пĕртанлăхĕн идеологийĕ гитлеровецсен этемлĕхе курайманлăх идеологине татăкланах çĕнтерчĕ. Халăхсен туслăхĕ Совет çĕршывĕн вăй-хăвачĕн аслă çăлкуçĕ пулса тăрать. Совет Союзне кĕрекен вунултă союзлă республика пĕр шутлă пулса гитлерла Германие хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра пĕр-пĕринпе татах та таччăнрах пĕрлешрĕç, хăйсен нацилле государственноçне, хăйсен нацилле чăн-чăн ирĕклĕхне татах та ытларах çирĕплетрĕç. Тĕнчери пĕр халăх та хăйĕн пуласлăхне, ССР Союзĕнчи халăхсем пек, уçăмлăн курса тăмасть.

Вĕçне çитнĕ йĕркеллĕ те çирĕп демократизм Сталинла Конституцин паха уйрăмлăхсенчен пĕри пулса тăрать. Совет çĕршывĕнчи пур граждансем те хăйсен прависем тĕлĕшпе пĕртан, рабочисене, хресченсене, служащисене, вĕсем кирек хăш наци çынни пулсан та, çав правасене пурнăçа кĕртсе пыма никам та чарма пултараймасть. Пирĕн Конституци, — тенĕ Сталин юлташ,—«демократиллĕ ирĕклĕхсем çинчен пĕлтерет кăна мар, тата вăл, закон йĕрки тăрăх, вĕсене кирлĕ материальнăй средствăсем парса тăрать». Пирĕн Конституцин демократизмĕ социализмла демократизм пулса тăрать.

Çавăнпа та ĕнтĕ совет ĕçсыннийĕсем, ваттисемпе çамрăксем те, СССР Верховный Советне пĕрре суйланисем те, халь пуçласа суйлава хутшăнма хатĕрленекеннисем те пирĕн аслă Конституцие тĕпленрех те тĕпленрех вĕренеççĕ. Сталинла Конституцире çырса хунисем пурнăçа, совет çыннисен кĕрешĕвне ăнлантарса параççĕ. Ăна вĕренни пирĕн ăс-тăна хĕçпăшаллантарать, пире мухтанма тивĕçлĕ сăлтав парать, совет çĕршывĕн вăй-хăвачĕн çăлкуçĕсене, пире аслă çĕнтерÿ патне илсе пынă условисене тарăнрах ăнланса илме май парать.

СССР Конституцийĕн пирĕн çĕршыври граждансен обществăллă организацисене пĕрлешме право пурри çинчен калакан 126-мĕш статьине совет çыннисем большевиксен партине, Конституцие тăвакан аслă Сталин юлташа çав тери юратнипе вулаççĕ. Çав статьяра çапла каланă: «... рабочи класăн тата ĕçсыннисен урăх сийĕсен речĕсенчи чи хастар та чи ăс-тăнлă гражданĕсем Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партине пĕрлешеççĕ; вăл ĕçсыннисен социализм стройне тĕреклетсе малалла ÿстерессишĕн пыракан кĕрешĕвĕнче малти отряд пулса тăрать, ĕçсыннисен мĕнпур организацийĕсене—обществăллисене те, государство организацийĕсене те—ертсе пыракан йышĕ пулса тăрать».

Коммунистсен партийĕ ертсе пыни Совет çĕршывĕн вăй-хăвачĕн аслă çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăрать. Вăрçă вăхăтĕнче çакна пĕтĕм тĕнче курчĕ. Лару-тăрава тĕрĕс ăнланнăшăн, вăрçă фрончĕсенчи тата тĕнчери лару-тăрава тĕрĕс ăнланнăшăн совет халăхĕн большевиксен партине, Сталин юлташа тав тумалла. Большевиксен партийĕ пирĕн халăха Тăван çĕршывăн кĕрешмелли аслă программăпа хĕçпăшаллантарчĕ. Вăл çĕнтерÿ тăвассишĕн кĕрешекен халăхăн вăй-хăватне пĕтĕçтерсе организацилерĕ. Партипе совет халăхĕн çулпуçĕ аслă Сталин паттăр Хĕрлĕ Çарăн мĕнпур ĕçĕсене ертсе пычĕ, вара пирĕн Хĕрлĕ Çар, Сталинăн стратегилле планĕсене пурнăça кĕртсе пырса, фашистла агрессорсен йыткĕтĕвĕсене аркатса тăкрĕ.

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе пирĕн халăх коммунизм строительствин малашнехи аслă ăнăçăвĕсене курса тăрать. Аслă Сталин ертсе пынипе. Сталинла Конституци—çĕнтернĕ социализм Конституцийĕ ялавĕ айĕнче эпир хамăрăн Тăван çĕршыва малалла чечеклентересси патнелле, хамăрăн социализмлă государствăн вăй-хăватне малалла çирĕплетесси патнелле пыратпăр.

Сывă пултăр аслă Совет Союзĕ — пирĕн Тăван çĕршыври халăхсен телейĕпе мухтавĕн шанчăклă тĕрекĕ!

Сывă пултăр СССР Конституцийĕ — социализмлă обществăн Конституцийĕ!

Сывă пултăр Совет демократийĕ!

(«Правда» хаçатăн ноябрĕн 1-мĕшĕнчи умстатьи).

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ

СĔНТĔР. Районри партин пуçламĕш организацийĕсем СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес ĕçсене вăйлатма тытăнчĕç.

Ильинкăри парторганизацин пухăвĕнче суйлава хатĕрленес ыйтăва сÿтсе-явнă. Суйлав Положенине ăнлантарса пама коммунистсемпе комсомолецсенчен 30 агитатор уйăрнă. Кашни 10—15 кил çумне уйрăм агитатор çирĕплетнĕ. Кашни тунтикун агитаторсен занятийĕсем пулса иртеççĕ, кашни юнкун агитаторсем суйлавçăсене пухса Суйлав Положенине ăнлантарса параççĕ.

Çавăн пекех ку ыйтупа колхозсенче те пухусем пулса иртеççĕ. «Осоавиахим» колхоз пухăвĕнче 7 çул вĕренмелли шкул директорĕ Л. И. Челышкин юлташ доклад туса панă.

Сĕнтĕр ял Советне кĕрекен Чкалов ячĕпе тăракан колхозри парти организацийĕн пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура Суйлав Положенине колхозниксем хушшинче вĕрентес ĕçе организацилесси çинчен сÿтсе-явнă, агитаторсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетнĕ.

АГИТАЦИ ĔÇНЕ ВĂЙЛАТМАЛЛА

Советски районра халĕ çĕршер агитатор ĕçлет. Вĕсем колхозниксене партипе правительство постановленийĕсене тата Суйлав Положенине ăнлантарса параççĕ.

Кутузов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ коммунист И. Егоров кашни бригада çумне агитаторсем, вулавçăсем çирĕплетнĕ. Вĕсем колхозниксене хаçатсем вуласа параççĕ, виçĕ кунта пĕрре стена хаçачĕ кăлараççĕ. Ку ĕçре Семенов агитатор тăрăшса ĕçлет. Колхоз уйри 214 гектар тырпула кĕске вăхăтра пуçтарса кĕчĕ. Государствăна 403 центнер тырă парса татрĕ. Çавăн пекех «Радио» колхозра Чаганов коммунист, «Красный партизан» колхозра Леснов коммунист агитаци ĕçне лайăх туса пынипе ялхуçалăх ĕçĕсене районра ыттисенчен малтан вĕçлерĕç. Колхозсем тырпула кĕске вăхăтра вырса пĕтерчĕç, государствăна тырă парса татрĕç.

«Прогресс», «Комбайн», «Сеятель», «Хастар», Ильич ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те агитацине массăллă ĕçĕн паха тĕслĕхĕсене курма пулать.

Анчах та хăшпĕр колхозсенче агитаци ĕçне ытла та начар туса пыраççĕ.

Якаткассинчи агитколлектив (руководителĕ коммунист Языков), Александровскинчи, Мăн Ямашри агитколлективсем япăх ĕçлеççĕ. Агитаторсемпе вулавçăсене колхозниксем хушшинче сайрахутра кăна курма пулать. Кунта стена хаçачĕсем кăлармаççĕ. Çак колхозсем вара ялхуçалăх ĕçĕсене те вăраха ярса пыраççĕ, государствăна тырă парас тĕлĕшпе кайра пыраççĕ.

Халĕ СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май агитацине массăллă ĕçе пушшех лайăхлатас пулать.

Ф. СЕМЕНОВ.

ЛОМОНОСОВ ÇИНЧЕН

ЛЕНИНГРАД, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 31-мĕшĕнче СССР Наука академийĕн литература институтĕнче институтăн старши научнăй сотрудникĕ Модзалевский юлташ Ломоносов çинчен доклад туса панă.

Наука академийĕн архивĕнче вăл ку таранччен пĕлмен документа шыраса тупнă. Çав документ—«Ломоносов советникăн сочиненийĕсене тата ытти ĕçĕсене çырса тухни» ятлă. Документăн 81 пунктĕнче Ломоносов хăйĕн тĕрĕс тата историпе филологи наукисем тĕлĕшĕпе тунă мĕнпур ĕçĕсен ятне çырса тухнă.

Çав документа М. В. Ломоносов 1764 çулхи январĕн 19-мĕшĕнче М. И. Воронцов граф патне çырупа пĕрле янă пулнă. Вăл çырăва Ломоносов хăйне Наука академийĕн членне суйлаттарас шутпа çырнă. Модзалевский 1760 çулта Ломоносов вырăс историйĕ çинчен çырнă вĕренмелли «Вырăссен кĕске летописĕ» ятлă кĕнеки çинчен уйрăмах чарăнса тăнă. Çав кĕнекене—унăн варринчи пайĕ—Наука академийĕн библиотекарĕ тата вырăссен малтанхи библиографĕ Андрей Богданов çырнине тĕпчесе пĕлнĕ. Андрей Богданов çырнине вара Ломоносов редакциленĕ пулнă.

Доклада питĕ тимлĕн итленĕ. Ăна сÿтсе-явас ĕçе Берков, Томашевский профессорсем тата ыттисем те хутшăннă.

Ломоносов çинчен тупнă çĕнĕ материалсене Наука академийĕн сборникĕнче пичетлесе кăлараççĕ.

ÇĔНĔ УНИВЕРСИТЕТ

Кишиневра Государствăн çĕнĕ университетне уçаççĕ. Ку университетра физикăпа математика, биологи, геологипе тăпра, хими тата историпе филологи факультечĕсем пулаççĕ.

Колхоз государство умĕнче парăмлă мар

Çĕмĕрле районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине ĕçре пысăк çитĕнÿсем туниппе кĕтсе илет. Колхоз районра чи малтан авăн çапса пĕтерчĕ, сентябрĕн 27-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татрĕ, çĕрулмипе пахчаçимĕç памалли плана та ăнăçлăн тултарчĕ. Халĕ колхозăн государство умĕнче нимĕнле парăм та çук.

Çитес çулхи вăйлă тырпул никĕсне хывас тесе, колхоз октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те малта пырать. Ку колхозра выльăх-чĕрлĕх валли ăшă та çутă витесем, çителĕклĕ таран апат хатĕрленĕ. Ĕне, сурăх, пăру тата сысна витисене пурне те юсаса ăшă тытмалла тунă. Унти йĕркелĕхпе тасалăха правлени членĕсем эрнере пĕрре тĕрĕслесе тăраççĕ.

Район государствăна тырă парас тĕлĕшпе юлса пырать

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Район государствăна тырă парас тĕлĕшпе илнĕ обязательствăна халĕ те тултарайман-ха. Чылай колхозсем государство умĕнче пысăк парăма кĕнĕ.

Хăватукассинчи «Авангард» колхоз государствăна тырă памалли графика тăтăшах пăсса пырать. Паянхи куна колхозăн хатĕрлев пунктне татах 285 центнер тырă леçмелле. Колхоз председателĕ Ярусов юлташ государствăна тырă леçес тĕлĕшпе ответлăха туйса илмен. Тырă леçмелли лашасемпе час-часах урăх çĕрте усă кураççĕ. Акă, çак кунсенче Музяков колхозникĕ хăй валли вутă турттарма ниме тума колхоз лашисене панă. Ниме ĕçкинче колхоз председателĕпе пĕрле ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн уполномоченнăйĕ А. Кузнецов юлташ та пулнă.

Çирĕккассинчи «Профинтерн» колхозра та государствăна тырă парас ĕç япăх пырать. Колхоз тырă парас плана пурĕ те 50 процент çеç тултарнă. Анчах колхоз председателĕ Максимов юлташ ку тĕлĕшпе нимĕнле мерă та йышăнмасть. Колхозра двигатель пур, унпа авăн çапнă çĕрте усă курмаççĕ. Çав вăхăтрах çапнă тырă çук тесе, государствăна тырă памалли графика пĕрмаях пăсса пыраççĕ. Çавăн пекех «Красный маяк» колхоз (председателĕ Ильин юлташ), Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Яковлев юлташ), «Прогресс» колхоз (председателĕ Чумбейкин юлташ) тата ытти хăшпĕр колхозсем те государствăна тырă леçмелли плана 30—40 процент кăна тултарнă. Район центрĕнчи «Красный Четай» тата «Профинтерн» колхозсем те тырă парас тĕлĕшпе чăтма çук сÿрĕк ĕçлеççĕ. Çапах та ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ район центрĕнчи колхозсене мала кăларма тăрăшмаççĕ. Районри 66 колхозран 15-шĕ кăна тырă памалли графика тултарса пыраççĕ.

Район государствăна тырă памалли обязательствăна çитес кунсенчех пурнăçлама тивĕç. Ку тĕлĕшпе юлса пыракан колхозсене тимлĕн пулăшмалла.

П. ТИХОНОВ.

Государствăна кантăр вăрри памалли плана вăхăтра тултарассишĕн

Çĕрпÿ районĕнчи Заготлен пунктĕ кантăр вăрри хатĕрлемелли плана октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Хатĕрлев пункчĕн заведующийĕ Савельев юлташ ку ĕçре 1940 çултанпа ĕçлет. Вăл ватă пулин те, тăтăшах колхозсене çÿресе, вĕсене техникăллă культурăсем хатĕрлес тĕлĕшпе пулăшу парса тăрать. Савельев юлташа 1944 çулта кантăр вăрри хатĕрлемелли плана ăнăçлăн тултарнăшăн 400 тенкĕ укçа парса премиленĕ. Кăçал та ăна кантăр вăрри хатĕрлес ĕçе лайăх йĕркеленĕшĕн Заготлен конторин управляющийĕ тав туса Заготленăн Пĕтĕм Союзри пĕрлешĕвне награда пама тăратнă.

Кантăр вăрри хатĕрлес тĕлĕшпе Ишлей, Вăрнар тата Сĕнтĕр районĕсем те лайăх ĕçлеççĕ. Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне кантăр вăрри памалли плана Ишлей районĕ 73,2 процент, Вăрнар районĕ 68,1 процент, Сĕнтĕр районĕ 50 процента яхăн тултарнă. Çав вăхăтрах хăшпĕр районсем кантăр вăрри хатĕрлес тĕлĕшпе ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ панă графика пăсса пыраççĕ. Тĕслĕхрен, Шăмăршă районĕ плана 10 процент, Йĕпреç районĕ 8 процент, Чурачăк районĕ 6,6 процент çеç тултарнă. Çак районсен руководителĕсем техникăллă культурăсем хатĕрлес ĕçе тивĕçлипе ертсе пырас вырăнне ытларах сăмах çаптарса лараççĕ, юлса пыракан колхозсене тухса çÿресе кирлĕ пек пулăшса пымаççĕ. Асăннă районсен руководителĕсен ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă тĕле государствăна кантăр вăрри памалли плана тултарассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлемелле.

И. ТАРАСОВ.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе хăвăртламалла

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Матьшу ял Советĕнче укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе ытла та сÿрĕккĕн ĕçлеççĕ. План тăрăх ял Совечĕн IV-мĕш кварталта 94.440 тенкĕ пухмалла пулсан, паянхи куна пурĕ те 26.000 тенкĕ кăна пухнă. Уйрăмах ялхуçалăх налогĕпе военнăй тата подоходнăй налогсем пухас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Матьшу ял Советĕнче культурăллă вăй та пысăк. Кунта партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем тата 7 çул вĕренмелли шкул пур. Анчах та çак вăя укçа-тенкĕ пухас ĕçе кирлĕ пек мобилизацилемен, ялти актив ку ĕçе пачах та хутшăнмасть. Ялти активистсенчен хăшпĕрисем хăйсем те пысăк парăмлă. Акă, колхоз председателĕ М. Гаврилов государствăна тĕрлĕ тÿлевсене 700 тенкĕ ытла парса татман. Вулав çурчĕн заведующийĕ М. Ефремова юлташ государство умĕнче 239 тенкĕ парăмлă. Çавăн пекех В. Александров трактористăн 1010 тенкĕ, Ф. Степанов трактористăн 1.400 тенкĕ памалла, анчах вĕсем хăйсен парăмне татма тăрăшмаççĕ.

Государство умĕнчи парăма татасси кашни совет гражданинĕн чи ответлă тивĕçĕ пулса тăнине ăнланса илнĕ колхозниксем хăйсен обязательствисене вăхăтра тÿлесе татрĕç. К. Степанов, М. Семенов тата В. Алексеев колхозниксем хăйсен пур парăмĕсене те тахçанах тÿлесе татнă. Çак паха тĕслĕхсене ыттисем хушшине анлăн сарса пымалла. Вĕсен ĕçĕсем ыттисемшĕн пример пулса тăччăр.

С. ШАДИН.

ĂМĂРТКАЙĂК

Ой, эс, шухă кайăкăм,
Паттăр ăмăрткайăкĕ!
Пит çÿлте вĕçетĕн эс.
Пĕлĕтре çиçсĕн.
Вичкĕн çил те ним те мар,
Аслати те ним те мар,
Ярăнатăн тÿпере—
Çутçанталăкăн хуçи!

Аслă Кунăн хĕвелне,
Сапла ăмăртса, эпир
Хураллarăмăр ялан
Чыслăн та телейлĕн.
Тулчĕ тăшманăн шăпи,
Çитрĕ кĕтнĕ пархатар;
Халĕ хамăр алăрах
Çутă савăнăç уççи!

Ой, эс, аслă пурнăçăм,
Пархатарлă пурнăçăм!
Паттăр халăх чĕрине
Вăй-хăват паратăн.
Сăхă ĕмĕтлĕ тăшман
Çыхланаймĕ нихăçан,
Пирĕн чаплă Çĕршывра
Явăнаймĕ тек çăхан.

Кашни канăçлă кĕтес
Çутă чечек çурнăшăн
Тав тăватпăр çулпуçне
Ăшшăн, тараватлăн.
Вутлă тăвăл хускалсан,
Кар çĕкленĕпĕр самант,
Кашни пулăпăр ун чух
Ăмăрткайăкпа пĕр тан.

Ой, эс, чаплă ĕмĕрĕм,
Çилçунатлă ĕмĕрĕм!
Кунçул урлă ярăнса
Иртсе кайăн эсĕ.
Пурнăç панă хăватпа
Ăмăрткайăк чĕпписем
Вĕçсе тухĕç йăварăн,
Тупа тăвĕç хĕвеле.

Ырă, чаплă ятпала
Çĕн ĕмĕре кĕнĕшĕн
Аса илĕç тен пире
Асапа пĕлмесĕр.
Вара çĕнĕ чаппала
Хурал тăрĕçĕ вĕсем
Пурнăç пÿрнĕ ырлăхпа
Сталин панă телее!

Илья ТУКТАШ.

СССР ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕТĔНЧЕН

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Совет театрĕн паллă мастерĕ СССР Халăх артисчĕ, Сталинла премя лауреачĕ Николай Павлович Хмелев йывăр чир хыççăн вилни çинчен хурланса пĕлтерет.

СССР Совнаркомĕнче

СОВЕТ ТЕАТРĔН ПАЛЛĂ МАСТЕРĔН СССР ХАЛĂХ АРТИСЧĔН Н. П. ХМЕЛЕВĂН ЯТНЕ ĔМĔРЛĔХЕ ПАЛĂРТАССИ ТАТА УНĂН ÇЕМЬИНЕ ПУЛĂШАССИ ÇИНЧЕН

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. СССР Халăх артисĕн Н. П. Хмелевăн ячĕпе çак шкулсенче стипендисем тунă:

а) Мускаври Художество Академи Театрĕ çумĕнчи В. И. Немирович-Данченко ячĕпе тăракан шкул-студире вĕренекенсене валли—400-шер тенкĕллĕ 4 стипенди;

б) Театр Искусствин Государство Институтĕнчи студентсене валли—400-шер тенкĕллĕ икĕ стипенди.

2. Мускав хулинчи Пушкарев переулокне Хмелев урамĕ тесе ят панă.

3. Горький облаçĕнчи Сормоврăри 77-мĕш номерлĕ кăтартуллă вăтам шкула Н. П. Хмелев ятне панă.

4. Н. П. Хмелев арăмне — Надежда Сергеевна Хмелевăна тата ывăлне Алексее 20.000 тенкĕ, йăмăкне—Тамара Павловна Хмелевăна 10.000 тенкĕ пособи памалла тунă.

5. Н. П. Хмелев ывăлне — Алексей Хмелева 18 çула çитиччен уйăхне 500-шер тенкĕ пенси парса тăмалла тунă.

6. СССР Халăх артистне Н. П. Хмелева государство шучĕпе пытарма йышăннă.

СОВЕТ ПРОФСОЮЗĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ НОРВЕГИРЕН МУСКАВА ТАВРĂННĂ

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ Норвегирен Мускава таврăннă. Унта вăл хими промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕ чĕннипе кайнă пулнă. Делегаци сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче Осло хулинче хими промышленноçĕнчи рабочисен конгресĕнче пулнă.

Конгресра совет делегацийĕн руководителĕ В. Т. Зуев юлташ ССР Союзĕнчи профсоюзсен ĕçĕ çинчен, вĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе хутшăнни çинчен тата оккупантсем аркатса хăварнă хуçалăха юсаса ура çине тăратасси çинчен каласа панине питĕ тимлĕн итленĕ. Конгресс пĕрсаслăн пулса совет профсоюзĕсемпе туслă çыхăну тытса тăма тата хăйсен ĕçĕсем çинчен пĕр-пĕрне тăтăшах пĕлтерсе тăма йышăннă. Совет профсоюзĕсен делегацийĕ хими, цинк, электрохими тата ытти промышленноçсен чылай, предприятийĕсенче пулса курнă. Ăна пур çĕрте те кăмăллăн кĕтсе илнĕ. Предприятисенче рабочисен пухăвĕсене организациленĕ, çав пухусенче совет профсоюзĕсен представителĕсем ССР Союзĕнчи ĕçсыннисен пурнăçĕ çинчен докладсем туса панă.

Норвегири рабочисем хĕрарăмсемпе çамрăксен ĕç условийĕсемпе ытларах интересленнĕ. Çавăн пекех тата вĕсем государствăн социальнăй страховани органĕсен ĕçĕсем çинчен, совет государствипе профсоюз организацийĕсем ача-пăчасемшĕн тăрăшни çинчен ыйтса пĕлнĕ. Çав пухусенче рабочисемпе работницăсем, интеллигенци представителĕсем нимĕçсем сиенлесе хăварнă хуласемпе предприятисене тата культура учрежденийĕсене юсаса ура çине тăратасси çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлнĕ.

Берген хулинче совет делегачĕсем заводра, портра—Германин шыв айĕн çÿрекен киммисен базинче пулнă. Норвегири рабочисем СССР представителĕсене кăмăллăн йышăннă. Хĕрлĕ Çарпа Совет Союзĕнчи халăхсене этемлĕхпе тĕнче цивилизацине хÿтĕлесе хăварас тĕлĕшпе тунă жертвăсемшĕн тав тума ыйтнă. Совет делегачĕсем Норвегири профсоюзсен паллă руководителĕсемпе калаçнă. Вĕсем ССР Союзĕнче профсоюзсен организацийĕсен структури çинчен, промышленноçăн тĕрлĕ отраслĕсенчи профсоюзсен ĕçĕсем çинчен, Совет Союзĕнчи ĕçсыннисен йăлапа культура тĕлĕшĕнчи пурнăçĕ çинчен каласа панă.

Совет профсоюз делегацийĕ Норвегире виçĕ эрне пулнă. (ТАСС).

УРАЛТА ЯШМА ВЫРĂНĔ ТУПНĂ

СВЕРДЛОВСК, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Уралăн çурçĕрти пайĕнче Ивдель районĕнче яшма вырăнĕ тупнă. Кунта симĕс, кĕрен, хĕрлĕ тата хура яшмăсем пур. Геологсем каланă тăрăх, Ивдель таврашĕнчи яшма кăнтăр Уралти Орск таврашĕнчи яшмăран нимĕн чухлĕ те кая мар.

ПАРТИ ПУРНӐÇĔ

Государствӑна тырӑ парасси — парторганизацисен чи пысӑк задачи

ТӐВАЙ. Кунта ВКП(б) райкомӗн пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум Чӑваш Обкомӗн XXIII-мӗш пленумӗн итогӗсем çинчен ВКП(б) райком секретарӗ Молоствов юлташ тунӑ доклада сӳтсе-яврӗ. Докладчик районри колхозсем государствӑна тырӑ тата ытти ялхуçалӑх продукчӗсем парас, ялхуçалӑх ӗçӗсене вӗçлес тӗлӗшпе мӗнле ӗçлени çинчен каласа пачӗ.

Районри малта пыракан колхозсем хӑйсем илнӗ обязательствӑсене чыслӑн пурнӑçларӗç, ялхуçалӑх ӗçӗсене пурне те вӑхӑтра туса пыраççӗ. «Новый путь», Ленин ячӗпе тӑракан, «Октябрь», Мичурин ячӗпе тӑракан колхозсем ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне государствӑна тырӑ çерулми тата пахчаçимӗçсем пӗтӗмпех парса татрӗç, халӗ планран ирттерсе параççӗ. «Трудовой путь», Молотов ячӗпе тӑракан, «1-ое Мая» колхозсем авӑн çапса пӗтернӗ. Çак колхозсен руководителӗсем авӑн çапнӑ çӗрте машинӑсемпе лайӑх усӑ курчӗç, хатӗрлев пунктне тырӑ турттарас ӗçе кирлӗ пек организацилерӗç.

Анчах та районри чылай колхозсем чӑтма çук начар ӗçлеççӗ.

Район государствӑна тырӑ парас тӗлӗшпе республикӑри чи юлашки вырӑнсенчен тухаймасть. Ноябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне тырӑ хатӗрлемелли плана пӗтӗмпе те 65 процент çеç тултарнӑ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмӑнах «25-ое Октября», «Коммунар», «Звезда», «Большевикла колхозӑн», «Красное Сормово», «КИМ» колхозсем начар ӗçлеççӗ.

Юлса пыракан колхозсен руководителӗсем авӑн çапас ӗçе хӑвӑртлатас тесе нимӗн те тумаççӗ, хӑйсене такам килсе пулӑшасса кӗтсе лараççӗ.

Ялхуçалӑх ӗçӗсене черетлӗн туса пырас сиенлӗ практикӑна халӗ те пӗтермен-ха. Çавна пула çӗрулмипе пахчаçимӗçсене тата техникӑллӑ культурӑсене пухса кӗртсе государствӑна парас ӗç вӑраха юлса пырать. Октябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне 8 колхозра 62 гектар çинчи тырпулсене пухса кӗртмен, 9 колхозра çӗрулми, 10 колхозра кантӑр тата 8 колхозра вӑрлӑхлӑх курӑк пухмасӑр юлнӑ. Район çак тарана çитсе те кӗлтессене капана хывса çитермен.

Районри çӗрӗç пайӗ колхозсене кирлӗ пек ертсе пымасть. Юлса пыракан колхозсене вырӑпа тухса пулӑшу пани çук. Райçӗрӗç пайӗн заведующийӗ Куракин юлташ тата главнӑй агроном Михайлов юлташ колхозсенчен сводкӑсем пухса çеç лараççӗ. МТС директорӗ колхозсенче авӑн çапас ӗçе тивӗçлипе организацилемен. «Красное Сормово» колхозра МТС молотилки октябрь уйӑхӗнче пӗр кун та ӗçлемен.

Районри колхозсенче 22 пуçламӗш парторганизаци шутланать. Анчах та партин пуçламӗш организацийӗсенчен нумайӗшӗ колхозсем умӗнче тӑракан задачӑсене татса парас ӗçе коммунистсене мобилизацилемен. «Звезда» колхозри пуçламӗш парторганизаци ялхуçалӑх ӗçӗсене тивӗçлипе ертсе пымасть, кунта массӑллӑ-политикӑллӑ ӗçе те пачарлатнӑ. Парторганизацин секретарӗ пулнӑ М. Разномазов ӗçрен пӑрӑнса çӳренӗ, кӑçалхи çул мӗнпурӗ те 4 ӗçкунӗ кӑна тунӑ, çемьи те колхозра ӗçлемест. «Красная Чувашия» колхозри парторганизацинче пурӗ 16 коммунист шутланать. Анла пулин те ку колхоз ялхуçалӑх ӗçӗнче юлса пырать. Уйрӑм коммунистсем колхоз ӗçне хутшӑнмаççӗ. ВКП(б) членӗ Галина Васильева кӑçал колхозра пурӗ те 12 ӗçкунӗ кӑна тунӑ.

Пленум юлса пыракан колхозсен руководителӗсемпе парторганизацисен ӗçне хытӑ критиклерӗ, государствӑна тырӑ парса татас тӗлӗшпе çине тӑрса ӗçлеме хушса хӑварчӗ.

В. ИЛЬИН.

МУСКАВРИ ТРОФЕЙ ВЫСТАВКИНЕ ЯПОНИ ÇАРӖН ХĔÇПАШАЛĔН ТĔСЛĔХĔСЕНЕ ИЛСЕ ПЫНӐ

Трофей выставкине Инçетри Хӗвелтухӑçӗнчи 1-мӗш фронт çарӗсем Муданьцзян—Харбин районӗнче Квантун çарне аркатса тӑкнӑ чухне тытса илнӗ хӗçпӑшалсен тӗслӗхӗсен пӗрремӗш эшелонне (50 вагон) илсе пынӑ. Выставкӑна тӗрлӗ йышши тупӑсем, танксем, танкеткӑсем, хӑйне уйрӑм машинӑсем, инженерипе хими пурлӑхӗ, сыхӑну хатӗрӗсем, боеприпассем тата тумтирсем илсе пынӑ.

Мускав шывӗн çыранӗ тӑрӑх Япони тупписене лартса тухнӑ. Кунта 20 йышши ытла тупӑ, 212 килограмм таякан çамӑл батальон туппинчен пуçласа 45 тонна таякан 240 миллиметрлӑ гаубицӑсем таранах пур.

Япони çарӗнче çӗнӗ техникӑпа пӗрле кивви те пулнӑ. Выставкӑн артиллери пайӗнчи япаласем çакна лайӑх кӑтартса параççӗ. 1905—1908 çулсенче тунӑ тупӑсемпе пӗрле çӗнӗ йышши лайӑх тупӑсем те пур. Пӗр питӗ пысӑк тупӑ илсе пынӑ, унӑн кӗпçине пӗр урапа çине вырнаçтарса лартнӑ, лафетне—тепӗр урапа çине. Вӑл—150 миллиметрлӑ; 40 килограмм таякан снарядсемпе 25 километр инçӗше перет. Унпа юнашар — гаубица ларать, унӑн кӗпçи çав тупӑнни пекех хулӑм; танксене пемелли тупӑсем (вӗсем 100 миллиметр хулӑмӗш броньӑна персе шӑтараççӗ), тусем хушшинче çапӑçмалли тӗрлӗ йышши тупӑсем, йӗрп-тавра пеме пултаракан зенитнӑй тупӑсем лараççӗ.

Виçӗ йышши танксемпе танкеткӑсем пур. Танкетка çине 7,7 миллиметрлӑ пӗр пулемет лартнӑ. Тӑватӑ цилиндрлӑ бензин двигателӗ вырнаçтарса лартнӑ. 1935 çулта туса кӑларнӑ 10 тонна йывӑрӗш танк çинче—6 цилиндрлӑ дизель двигателӗ иккӗ. Танк çинче 2 пулемет.

Вӑтам танк 15,4 тонна таять.

Выставкӑн артиллери пайӗнче японецсен миномечӗсене тата оптика приборӗсене кӑтартнӑ.

Универсальнӑй ручной пулеметпа станковӑй пулеметсем те пур.

Тӗллесе пемелли приборсем нумай тӗрлӗрсем пур. 5 метр тӑршшӗ перископ, çавӑнса тӑракан линзӑллӑскер—техника тӗлӗшӗнчен çӗнӗ япала пулса тӑрать. Çав перископ тусем хыçӗнче тӑрса сӑнама май панӑ.

Интендант пайӗнче—тӗрлӗ тумтирсем тата çар сыннисен чин паллисем пур.

Çав мӗнпур япаласем ӗçлӗ выставкӑна пыракан çынсене Япони çарӗн хӗçпӑшалӗпе малтанлӑха паллашма май параççӗ.

Çитес вӑхӑтра Маньчжурирен трофейсен тепӗр эшелонӗ килмелле

Ноябрӗн 2-мӗшӗнчен пуçласа çав трофейсене пурте пырса курма пултараççӗ. (ТАСС).

Цехпа цех ӑмӑртаççӗ

Сӗнтӗрти райпромкомбинатра ӗçлекенсем Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 28 çул тултарнӑ уява производствӑра çӗнӗ çитӗнӳсем туннипе кӗтсе илессишӗн нумайӑн пӗлмесӗр ӗçлеççӗ. Комбинатра цехпа цех, рабочипе рабочи ӑмӑртса ӗçлеççӗ. Ӑмӑртура уйрӑмах урапа-çуна юсакан цехри М. Антоновпа П. Першев рабочисем малта пыраççӗ. Вӗсем хӑйсен ӗç нормине кулленех 150 процентран ытла тултараççӗ. Кӑçал вӗсене иккӗшне те лайӑх ӗçленӗшӗн Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗ Хисеплӗ грамота парса наградӑланӑ. Атӑ-пушмак тӑвакан цехри мастер П. Пчелкин, нормӑна кулленех 120—130 процент тултарса ӗçлет. Иртнӗ çул ӑна Вырӑнти промышленность наркомачӗ укçа парса премиленӗ. Кӑçал та вӑл Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине илме тивӗçлӗ пулчӗ.

Çӑматӑсем йӑвалакан цехри мастер П. Игнатьев нормӑна кулленех 150 процента яхӑн тултарса пырать. Вӑл халӗ 12 çамрӑка ӗçе вӗрентет. Ытти цехсенчи рабочисем те хӑйсен ӗç тухӑçлӑхне кулленех ӳстерсе пыраççӗ.

Г. ДАНИЛОВ.

Хӑйсен ӗç нормине ирттерсе тултараççӗ

ÇĔРПӲ. Абакасинчи Громов ячӗпе тӑракан промартельте ӗçлекенсем Октябрь уявне ӗçре пысӑк çитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн пӗр-пӗрипе ӑмӑртса ӗçлеççӗ. Артель 9 уйӑхри производство планне 104 процент тултарнӑ. Ку уйӑхра та артель коллективӗ хӑйӗн ӗç планне ӑнӑçлӑн тултарса пырать. Уйрӑмах кунта çуна тӑвакан цех тухӑçлӑ ӗçлет. Ку цехри комсомолецсемпе çамрӑксен Филиппов ертсе пыракан бригади норма тӑрӑх пӗр çуна тӑвас вырӑнне кулленех 2-шер çуна туса кӑларать.

Çавӑн пекех пир-авӑр тӗртекен М. Игнатьева тата П. Илларионова юлташсен бригадисем те хӑйсен ӗç нормине кулленех ирттерсе тултараççӗ.

Е. СВЕРЧКОВА.

Кунта хӑçан хӗле хатӗрленме пуçлаççӗ-ши?

ВӐРНАР. Çарӑклӑри вӑрман пункчӗ (начальникӗ П. Аникин) паянхи куна çитсе те хӗле хатӗрленме тытӑнман. Часах акӑ вӑрманта вӑрман хатӗрлес тата турттарас ӗçсем пуçланӗç, анчах кунта рабочисем пурӑнакан бараксене юсас тӗлӗшпе пачах та ӗçлемеççӗ. Бараксенчи кӑмакасем хутма юрӑхсӑр, вут хутсанах пӳрте тӗтӗм тухса тулать. Бараксем пӗтӗмпех тусаппа е çӳп-çаппа тулса ларнӑ.

С. ШАЛАНКА.

ПИЛĔК КУН ХУШШИНЧЕ ÇУРТ ТУСА ЛАРТАÇÇĔ

СВЕРДЛОВСК, октябрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). «Свердловскпромстройӑн» йывӑç каскалакан комбинатӗнче çуртсем тӑвакан цех туса лартнӑ. Çав цех штрантӑвакан пӗр хутлӑ çуртсем туса кӑларать. Çурт лартнӑ çӗрте çере чавнинчен пуçласа çурта пӗтӗмпех туса çитериччен 5 кун кӑна иртет. Свердловск хулинче туса лартнӑ малтанхи 50 çурта çынсем питӗ пысӑк хак панӑ.

23.000 ГЕКТАР ÇАМРӐК ВӐРМАН

Азербайджан ССР-ӗнче вӑрман хуçалӑхне аталантарас тӗлӗшпе лайӑх ӗçлеççӗ. Кунти хӑшпӗр районсенче 1.200 гектар çамрӑк йывӑç лартнӑ. Тӑваттӑмӗш пилӗкçуллӑхра Азербайджанра çамрӑк вӑрман 23.000 гектар пулать.

РЕСПУБЛИКА ТӐРӐХ

ПЛАНРАН ИРТТЕРСЕ 5 ПИН ТЕНКĔЛĔХ ПРОДУКЦИ

ÇĔМĔРЛЕ, ноябрӗн 2-мӗшӗ. (Телефонпа). Турн Кӑмашари «Обод» артель коллективӗ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 28 çул тултарнӑ уява пысӑк çитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн ӗç тухӑçлӑхне кулленех ӳстерсе пырать. Артель 10 уйӑх хушшинчи производство планне мӗнпур продукци туса кӑларас енӗпе 113 процент ытла, куллен кирлӗ таварсем туса кӑларас енӗпе 132 процента яхӑн тултарнӑ. Уйрамах артель октябрь уйӑхӗнче тухӑçлӑ ӗçлерӗ. Ку уйӑхра планран ирттерсе пурӗ 5.000 тенкӗлӗх продукци туса кӑларнӑ.

Ӑмӑртура урапасем тӑвакан тата кустӑрмасем тӑвакан цехсем малта пыраççӗ. Вӗсем октябрь уйӑхӗнчи плана 150—160 процент тултарнӑ. Çавӑн пекех кашӑксем тӑвакан цех та иртнӗ уйӑхра, ытти уйӑхсемпе танлаштарсан, чылай тухӑçлӑрах ӗçлерӗ, вӑл хӑйӗн производство планне 140 процент тултарчӗ. Артельте стахановецсен йышӗ те ӳссех пырать. Урапасем тӑвакан цехри М. Петров задание кулленех 160 процент тултарса пырать. Кашӑксем тӑвакан цехра В. Кузнецов кулленхи нормӑна 140 процент таран тултарать. Вӑрман турттарас ӗçре иртнӗ уйӑхра Широковпа Толстова юлташсем тухӑçлӑ ӗçлерӗç. Вӗсем хӑйсен нормине кулленех 180—200 процента яхӑн тултарса пычӗç.

И. СОРОКИН.

150.000 КĔНЕКЕ

Чӑваш АССР-ӗнчи сӳтӗç учрежденийӗсен управленийӗ ялсенчи вулав çурчӗсене 150.000 кӗнеке ярса панӑ.

Ӳкерчӗк çинче: Красноармейски районри «Красная звезда» колхозри сысна ферминче ӗçлекен С. М. Михайлов юлташ. Вӑл сысна ферминче 10 çул ӗçлет. Кашни çулах сысна ӗрчетмелли плана ытлашшипех тултарать. Сысна çурисене лайӑх пӑхса ӳстернӗшӗн ӑна ӗçшӗн хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх 12 сысна çури панӑ.

УКÇАПА ЯПАЛА ЛОТЕРЕЙИПЕ ИЛНĔ ВЫЛЯВСЕМ

Елчӗк районӗнче укçапа япала лотерейин билечӗсем тӑрӑх тухнӑ вылявсемшӗн кӑçал 300.000 тенкӗ яхӑн укçан тӳленӗ тата 40.000 тенкӗлӗхе яхӑн тӗрлӗрен япаласем панӑ.

22 ÇУЛ ХУШШИ КĔТӲÇРЕ

ИШЛЕЙ. Салапайра пурӑнакан колхозник Андрей Пигачев ачаллах кӗтӳ кӗтнӗ, кӗтӳ кӗтме вӑл 10 çултах пуçланӑ. Пигачев юлташ районри чылай ялсенче кӗтӳ кӗтнӗ.

1945 çулта А. Пигачев Кипечкасси ял Советӗнчи Шупашкаркасси ялӗнче кӗтӳ кӗтме тытӑнчӗ. Вӑл выльӑхсене çу каçах лайӑх пӑхрӗ, пӗр выльӑх та сухатман. Кӗтӳре пӗр-пӗр выльӑх чирлесенех Пигачев юлташ çийӗнчех выльӑх хуçине пӗлтерет. К. Гренадерова тата У. Ефимова колхозницӑсен сыснисем кӗтӳре ӑнсӑртран чирлесе кайнӑ. Пигачев юлташ сисӗмлӗхне пула вӗсене çийӗнчех ветеринари пулӑшӑвӗ парса, чиртен сыватнӑ.

Андрей Пигачев кӗтӳ кӗтес ӗçре пӗтӗмпе 22 çул ӗçлет, вӑл халӗ колхозӑн мухтавлӑ кӗтӳçӗ.

В. ЧИГАРКИН.

ВĔРЕНЕКЕНСЕМ ВАЛЛИ ВĔРИ АПАТ

Тип Тимешри (Елчӗк районӗ) пуçламӗш шкулта 72 ача вӗренет. Ачасем шкула сиктермесӗр çӳресе тӑрӑшса вӗренеççӗ. Вӗсене кӑçал кӗнекесем, карандашсем, ручкӑсемпе пересем чылай илсе панӑ тата шкулта вӗри апат организациленӗ. Вӗри апат валли çулла ачасем пуçтарнӑ пучахран 5 центнер тырӑ çапса илнӗ тата шкул участокӗнчен 150 пат çӗрулми кӑларса хатӗрленӗ. Кунсӑр пусне, ытти продуктсем те пур. Шкулти ачасене кашни кун вӗри апат çитерсе̇ç. Ку шкулӑн кӑçал 60 кубометр вутта хатӗрлемелле. Паянхи куна 35 кубометр турттарнӑ. Хӗлле пуличчен шкул вутта [illegible] турттарса хатӗрлет.

М. ЕГОРОВ.

Пӗтӗм тӗнчери çамрӑксен Лондонри конференцийӗ

ОКТЯБРӖН 31-мӗшӗнчи КАÇХИ ЛАРУ

ЛОНДОН, ноябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗтӗм тӗнчери çамрӑксен конференцийӗн октябрӗн 31-мӗшӗнче каçхине пулнӑ ларӑвне Совет делегацийӗн членӗ Совет Союзӗн Геройӗ Евгений Федоров председатель пулса ертсе пынӑ. Делегатсем ку ларура чи пысӑк делегацисен представителӗсен ирхи ларура каланӑ сӑмахӗсене активлӑн сӳтсе-явнӑ. Ку вӑл конференцин кун йӗркинче тӑракан пӗрремӗш ыйтӑва — ирӗклӗхпе лайӑх пурнӑç туса хурассишӗн çамрӑксен мӗнле кӗрешмелли çинчен сӳтсе-явни пулать. Ку лару пӗтес умӗн çакӑ паллӑ пулнӑ: конференцие Румыни, Венгри тата Болгари делегацийӗсем çитнӗ. Конференцие Греци çамрӑкӗсен делегацийӗ кӑна пыман. Франци делегачӗ Кестемен Греци делегацийӗ мӗн пирки ку таранччен те çитмени çинчен ыйтнӑ. Пӗтӗм тӗнчери çамрӑксен совечӗн секретарӗ Китти Хукхэм çапла ӑнлантарса панӑ: юлашки хыпарсем тӑрӑх, Греци правительстви Греци çамрӑкӗсем суйланӑ делегацин пӗр членне кӑна Лондона кайма документсем панӑ, çав делегат халӗ çул çинче. Делегацин ытти членӗсем кирлӗ документсем илеймен, çавӑнпа вӗсем конференцие килме тухма пултарайман. Çак хыпара илтнӗ хыççӑн Инди çамрӑкӗсен делегатки студентсен союзӗн представительници Греци çамрӑкӗсен делегацине çавӑн пек чарнине хирӗç протестласа чрезвычайнӑй резолюци йышӑнма сӗннӗ. Конференци çав сӗнӗве пӗр кӑмӑллӑ пулса йышӑннӑ.

ТИТО МАРШАЛ СОВЕТ ÇАМРӐКĔСЕН ДЕЛЕГАЦИНЕ ЙЫШӐННА

БЕЛГРАД, ноябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Октябрӗн 31-мӗшӗнче каçхине Тито маршал Югослави тӑрӑх çӳрекен совет çамрӑкӗсен делегацине йышӑннӑ. Тито маршалпа калаçнӑ чухне совет çамрӑкӗсен представителӗсем Тито маршала хӑйсем Югославире çӳренӗ чухне мӗн курнине, вӗсене пуринчен ытла мӗн кӑмӑла кайнине каласа кӑтартнӑ; пуринчен те ытларах вӗсем Югославире фашистла нимӗç захватчикӗсем юхантарнӑ хуçалӑха ура çине тӑратассишӗн çав тери вӑйлӑ ӗçленине палӑртнӑ. Делегатсем çапла каланӑ: совет çамрӑкӗсен представителӗсене пур çӗрте те ӑшшӑн та кӑмӑллӑ йышӑнчӗç, тенӗ.

Тито маршал совет çамрӑкӗсен делегацийӗ панӑ ыйтусем çине ответсем панӑ, Югослави халӑхӗсем тӑшманпа епле кӗрешни çинчен тата мирлӗ строительствӑра мӗнле çитӗнӳсем туни çинчен каласа кӑтартнӑ.

ПРОТЕСТАНТЛА ДУХОВЕНСТВО ТРУМЭН ПАТНЕ ÇЫРУ ЯНӐ

НЬЮ-ЙОРК, октябрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). «Протестант» журналӑн редакторӗ Лесли протестантла духовенствӑн 5.000 представителӗ ячӗпе Трумэн патне çыру янӑ. Çав çырура вӑл çапла каланӑ: «Китайри граждан кӗрешӗвӗнче çарсене Китайӑн пӗр пайӗнчен тепӗр пайне Америка самолечӗсемпе куçарса, США çав кӗрешекен енсенчен пӗрне пулӑшать, тесе пӗлтерчӗç. Çак пӗлтерӳ вӑл тӗрӗс пулмалла. Пӗрлешӳллӗ Штатсем Китайра çавӑн пек туни эсир флот кунӗнче каласа панӑ тулашри политикӑна хирӗç пырать. Эсир ун чухне çапла каланӑччӗ: ют çӗрщывсем пулӑшнипе туса хунӑ режима эпир ырламастпӑр, тенӗччӗ. Эсир каласа панӑ политика Китайра пурнӑçа кӗрсе пырасси çинчен пирӗн халӑха пӗлтерни питӗ кирлӗ».

АМЕРИКӐРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕНЧИ ПРЕДСТАВИТЕЛЬСЕН ПАЛАТИН ЧЛЕНĔ ПАТТЕРСОН КАЛАСА ПАНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрӗн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи представительсен палатин чылай членӗсем халӗ те Америкӑна хирӗç тӑвакан ӗçсене тӗпчес тӗлӗшпе ӗçлекен комиссие пӗтерес шухӑша пӑрахмаççӗ-ха.

Темиçе кун каярах «искусствӑпа наукӑн никама пӑхӑнман граждӑнла комитечӗ» организациленӗ апатланура США-ри предсавительсен палатин членӗ Паттерсон (Калифорни штатӗнчен суйланӑ демократ) çапла каланӑ:

«Америкӑна хирӗçле тӑвакан ӗçсене тӗпчес тӗлӗшпе ӗçлекен комиссие туса представительсен палати пирӗн Конституци тӑрӑх панӑ ирӗклӗхсене хесме ирӗк пачӗ. Çав комиссие халех салатса ямалла, тесе шутлатӑп эпӗ».

Паттерсон демократсемпе республиканецсен партийӗсене рабочи класӑн пурнӑçне лайӑхлатас тӗлӗшпе, нацисем хушшинчи тӑшманлӑха хирӗç кӗрешес тӗлӗшпе хӑйсен суйлав программине пурнӑçа кӗртсе пымасшӑн айӑпланӑ. «Конгресӑн хӑшпӗр членӗсем ку тӗлӗшпе кирек епле ӗç тума хӑтланнине те,— тенӗ вӑл,— реакционерсем коммунистла ӗç туни çине пӑхнӑ пек пӑхаççӗ. Ку паллӑ ӗнтӗ, çав реакционерсем суйлавра нумайрах сасӑ пухас тесе çеç çавӑн пек сӑмах пачӗç. Вара депутата суйланӑ хыççӑнах хӑйсене суйлавçӑсем панӑ наказсене йышӑнма пӑрахрӗç. Мӗншӗн ун пек тӑваççӗ-ха вӗсем? Мӗншӗн тесен США-ри реакциллӗ тата фашистла тӗп вӑйсем— промышленниксен нациллӗ ассоциацийӗ тата ыттисем те — США-ри радиостанцисенчен 80 процентне, хаçатсенчен 85 процентне контроль туса тӑраççӗ. Вӗсем конгресри хӑйсен хӳрешкисене хӑйсене кирлӗ пек халӑхпа демократие хирӗç ӗçлесе пыма хушаççӗ. Шӑпах çак реакционерсем ӗнтӗ, çӗршыври конгресри прогрессиллӗ вӑйсене пӑсса варалас тесе çав сӳлте асӑннӑ комиссие туса хучӗç».

АНГЛИ ПАРЛАМЕНЧĔН ЧЛЕНĔ ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТӐРУ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, октябрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Англи парламенчӗн членӗ лейборист Бен Леви нумаях пулмасть Грецире пулнӑ. Халь вӑл Мидлсекс графствинчи Слау хулинче сӑмах туса каланӑ. Вӑл çапла каланӑ: Грецири пулса иртмелли суйлавсем халӑх ирӗкӗпе унӑн шухӑш-кӑмӑлне палӑртма пултараймаççӗ. Грецире террор пуçпулса тӑрать, сулахайри партисем майлӑ шухӑшлакан çынсем хӑйсен пурнӑçӗшӗн чӗтресе пурӑнаççӗ. Террористсем вӗсем чи сылтӑмри монархистсем. Вӗсем вӑрçӑ умӗн Англире Мосли тунӑ пек организацисем тӑваççӗ. Монархистсем полицире те, çарта та пуçпулса тӑраççӗ, çавӑнпа та халӑх çитес суйлавра хӑй мӗнле шухӑшланӑ пек мар, монархистсенчен хӑраса, вӗсем хушнӑ пек тумалла. Суйлавçӑсен списокӗсене сылтӑмрисем лартнӑ çынсем çырса хатӗрленӗ. Мӗнле сасӑламаллине пӗлекен çынсем лайӑхах икӗ хут сасӑлама пултараççӗ.

«РУМЫНИ ИНЖЕНЕРĔСЕН СОЮЗĔН» КОНГРЕСĔ ЙЫШӐННИ

БУХАРЕСТ, октябрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Бухарест хулинче çак кунсенче «Румыни инженерӗсен союзӗн» конгресӗ пулса иртнӗ. Конгресс резолюци йышӑннӑ. Резолюцире инженерсемпе техниксене пурне те Румыни экономикине ура çине тӑратассишӗн кӗрешме, çав тӗлӗшпе правительствӑна пур майпа та пулӑшма чӗннӗ.

Конгресра Югослави, Болгари тата Чехословаки делегацийӗсем те пулнӑ. Югослави делегацийӗ ялан ӗçлесе тӑракан комитет туса хума сӗннӗ. Ку сӗнӗве Болгари тата Чехословаки делегацийӗсем те ырланӑ. Çав комитетӑн Балкан çӗршывӗнчи инженерсене пӗр-пӗрипе килӗштерсе ӗçлеме пулӑшса тӑмалла, çав çӗршывсем хушшинчи экономикӑллӑ сыхӑнӑва çирӗплетсе пымалла. Конгресс çав сӗнӗве пӗрсаслӑн çирӗплетнӗ.

ДАНИРИ СУЙЛАВСЕН ИТОГĔСЕМ

СТОКГОЛЬМ, октябрӗн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Октябрӗн 30-мӗшӗнче Данире парламента суйланӑ. Швецири радио пӗлтернӗ тӑрӑх, парламента çак партисем тӑратнӑ кандидатсене суйланӑ:

Социал-демократсен партийӗ тӑратнӑ кандидатсемшӗн 671.556 суйлавçӑ сасӑланӑ; çапла вӑл парти парламента 46 депутат ярать; ӗлӗкхи суйлавсемпе танлаштарсан, социал-демократсен партийӗ 10 мандат çухатнӑ;

«Венстре» ятлӑ парти тӑратнӑ кандидатсемшӗн 479.114 суйлавçӑ сасӑланӑ; çав парти парламента 38 депутат ярать; ӗлӗкхипе танлаштарсан, унӑн 10 мандат хутшӑннӑ;

Консерваторсен партийӗ тӑратнӑ кандидатсемшӗн 373.712 суйлавçӑ сасӑланӑ; консерваторсен партийӗ 26 депутат ярать; ӗлӗкхипе танлаштарсан, вӑл 5 мандат çухатнӑ;

Коммунистсен партийӗ тӑратнӑ кандидатсемшӗн 255.210 суйлавçӑ сасӑланӑ; коммунистсен партийӗ вара 18 депутат ярать; унӑн ӗлӗк депутат пулман;

Радикалсен партийӗ тӑратнӑ кандидатсемшӗн 166.945 суйлавçӑ сасӑланӑ; вӑл парти 11 депутат ярать; вӑл 2 мандат çухатнӑ;

«Датское единение» ятлӑ парти тӑратнӑ кандидатсемшӗн 63.555 суйлавçӑ сасӑланӑ; вӑл 4 депутат, ӗлӗкхинчен пӗр депутат ытларах ярать;

Данири «Правовой союз» тӑратнӑ кандидатсемшӗн 255.210 суйлавçӑ сасӑланӑ; вӑл союз 3 депутат, ӗлӗкхинчен пӗр депутат ытларах ярать.

Суйлава пӗтӗмпе 2.048.516 суйлавçӑ хутшӑнса сасӑланӑ.

ДАНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРӐНТАН ТУХНӐ

КОПЕНГАГЕН, ноябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Дани парламентне суйласа хунӑ май октябрӗн 31-мӗшӗнче Дани премьер-министрӗ Буль Дани корольне хӑйӗн правительстви вырӑнтан тухни çинчен çырса панӑ. Король правительство вырӑнтан тухнине килӗшнӗ, анчах та ӑна çӗнӗ правительство туса хуриччен правительство ӗçӗсене туса пыма хушнӑ. Çӗнӗ правительствӑна çитес эрне пуçламӑшӗнче туса хурӗç, тесе шутлаççӗ.

ПОЛЬША САЛТАКĔСЕМПЕ ОФИЦЕРĔСЕМ ФРАНЦИРЕН ПОЛЬШӐНА ТАВРӐННӐ

ВАРШАВА, октябрӗн 31-мӗшӗ. (ТАСС). «Глос Люду» ятлӑ хаçат çапла пӗлтерет: октябрӗн 24-мӗшӗнче Францире тӑракан Польша çарӗсен пӗр эшелонӗ Польшӑна çитнӗ. Пӗтӗмпе 2.000 çын таврӑннӑ, вӗсен шутӗнче 100 офицер. Салтаксем те, офицерсем те хӑйсен хӗçпӑшалӗпех таврӑннӑ.

ЯМАСИТӐ ГЕНЕРАЛА СУД ТУНИ

САН-ФРАНЦИСКО, октябрӗн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Сан-Франциско хулинчи радио çапла пӗлтерет: Филиппин столицинче — Манила хулинче—Японин чи паллӑ вӑрçӑ преступникне, японецсен Филиппинри çарӗн командующийӗ пулнӑ Ямасита генерала суд тума пуçланӑ. Суд умне Ямасита генерал штабӗн начальникӗ те тӑмалла пулать, тесе шутлаççӗ.

Судӑн пӗрремӗш ларӑвӗнче свидетельсем японецсем тытса хупнӑ граждансене тата тыткӑна лекнӗ Америка салтакӗсене çав тери тискеррӗн асаплантарса вӗлерни çинчен кала-кала панӑ. Манила хулинче темӗн чухлӗ халӑха вакласа тухнӑ. Çавӑн чухне çӑлӑнса юлнӑ икӗ свидетель çапла каласа панӑ: японецсен тӑватӑ матросӗ Манила хули сывӑхӗнчи станцире хӗрарӑмсене тата арçынсене питӗ тискеррӗн пере-пере пӑрахнӑ тата штыксемпе чиксе вӗлернӗ. Çавна вӗсем американецсем кӑçалхи февраль уйӑхӗнче Манила хулине ирӗке кӑларма пуçланӑ кунсенче тунӑ. Çӗр çын ытла вӗлернӗ.

Суд следователӗсем çапла каланӑ: японецсем Батаан çурутравӗ çинче тыткӑна лекнӗ салтаксене пурне те вӗлерсе тухнине тата вӗсем ытти çӗрсенче те çав тери тискер хӑтланнине Ямасита генерал хӑй тунӑ тесе калама çук, çапах та Ямасита генерал хӑй ертсе пынӑ çарсем хӑтланнишӗн ответ тытма тивӗçлӗ, тенӗ.

ЯПОНИН ШАЛТИ ĔÇСЕН МИНИСТРĔ ПУЛНӐ АБЭНЕ ТЫТСА ХУПМА ХУШНӐ

ТОКИО, октябрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Токио хулинчи радио çапла пӗлтерет: союзниксен командованийӗ Японин шалти ӗçсен министрӗ пулнӑ Генки Абэне тытса хупма хушнӑ. Ӑна Японии влаçӗсен концентрациллӗ лагере илсе пымалла.

ЧЕХОСЛОВАКИН ВӐХӐТЛӐХ НАЦИ ПУХӐВĔ УÇАЛНИ

ПРАГА, октябрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Прагӑри радио çапла пӗлтерет: октябрӗн 28-мӗшӗнче Прагӑра парламент çуртӗнче Чехословакин Вӑхӑтлӑх наци пухӑвӗ уçӑлнӑ. Пухӑва премьер-министр Фирлингер уçнӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл çапла каланӑ: çак вӑрçӑн йывӑр çапӑçӑвӗсенчен пирӗн халӑх вӑйланса тухрӗ. Пирӗн халӑх наци пӗрлӗхӗн паха идейин вӑйне ӑнланса илчӗ.

Ун хыççӑн депутатсем присяга йышӑннӑ. Вӑхӑтлӑх наци пухӑвӗн председателӗ пулма Иосиф Давида суйланӑ.

Пухӑвӑн çӗнӗ председателӗ Иосиф Давид сӗнӳ тӑратнӑ. Вӑл республика президентне Эдуард Бенеш доктора çӗнӗ суйлавсем тӑвиччен президент ӗçӗсене туса тӑма ыйтма сӗннӗ.

Çав сӗнӗве пуху çирӗплетнӗ.

Вӑхӑтлӑх наци пухӑвӗн ларӑвне Эдуард Бенеш пынӑ. Ӑна депутатсем тӑвӑллӑн алӑ çупса кӗтсе илнӗ. Бенеш сӑмах тухса каланӑ. Унӑн сӑмахне Вӑхӑтлӑх наци пухӑвӗ ӑшшӑн йышӑннӑ.

ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМ ВЕНЕЦУЭЛА ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШӐННА

ВАШИНГТОН, октябрӗн 31-мӗшӗ. (ТАСС). Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен государство департаменчӗ октябрӗн 30-мӗшӗнче хаçат-журнал представителӗсене çапла каланӑ: Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительстви Америка континентӗнчи ытти çӗршывсен правительствисемпе канашланӑ хыççӑн Венецуэлӑн çӗнӗ правительствине йышӑннӑ тенӗ.

АНГЛИ, ФРАНЦИ ТАТА ЛАТИНЛА АМЕРИКӐРИ ÇĔРШЫВСЕМ ВЕНЕЦУЭЛӐН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШӐННА

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчӗ Венецуэлӑри Каракас хулинчен пӗлтернӗ тӑрӑх, Венецуэлӑра официальнӑй йӗркепе çапла пӗлтернӗ: Англи, Франци, Чили, Костарика, Бразили, Перу тата Колумби Венецуэлӑн çӗнӗ правительствине йышӑннӑ. Унччен çав правительствӑна Куба, Гватемала, Мексика, Панама, Эквадор, Уругвай тата Парагвай правительствисем йышӑннӑ.

БРАЗИЛИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

МОНТЕВИДЕО, ноябрӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчӗ Рио-де-Жанейро хулинчен çапла пӗлтерет: Бразилин вӑхӑтлӑх правительствине Линьярес туса хунӑ.

Халӑха çапла пӗлтернӗ: декабрӗн 2-мӗшӗнче президента суйламалла. Вара çав суйлав хыççӑн Линьярес хӑйӗн полномочийӗсене çӗнӗ президента парать.

АНГЛИ БАНКНЕ НАЦИОНАЛИЗАЦИЛЕССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОН ПРОЕКТНЕ ЙЫШӐННА

ЛОНДОН, октябрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, октябрӗн 29-мӗшӗнче общинӑсен палатинче Англи банкне национализацилесси çинчен калакан закон проектне иккӗмӗш хут вуласа тухнӑ.

Финанс министрӗ пулса ӗçленӗ Джон Андерсон оппозицире тӑракан консерваторсен ячӗпе çав закона хирӗç каланӑ, çак закон пачах та кирлӗ мар, тенӗ вӑл.

Çав закон проекчӗшӗн 348 депутат, закон проектне хирӗç 153 депутат сасӑланӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—8-67, заместителӗн — 2-89, секретариатӑн—4-26, пропаганда пайӗн—2-89, парти пурнӑç пайӗн—3-97, промышленность пайӗн—3-99, ялхуçалӑх пайӗн—3-99, рабселькорсен пайӗн—8-67, издательство конторин — 8-23.

НТ 03443 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59242. 1 п. л. Тираж 10.000 экз.